13. Колхозăн ӳкнир бригадă бригадирĕн пухса кĕртнĕ участкăсене кашни кунлех йышăнмала, колхоз председателĕн—участкă çинче ĕç пĕтнĕ хыççăн 3 кунтан мала йăмасăр çав участкăна бригадиртан йышăнмала йĕркеле тăвас. Совхозсенче пуçха кĕртнĕ уйăсене совхоз директăрĕ йĕркеленĕ отделени управляющийĕнче йышăнать. Участкăсене йышăннă чух ĕç пахалăхне палăртса акт çырмала.

14. СССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта ийунĕн 29-мĕшĕнче йышăннă постановлинипе, „1939 çултан пуçласа колхозсене совхозсенче тĕштырăсене пĕтĕм лаптăкĕпех кашни колхоз тата колхоз хăйĕн вăрлăх участки çинче акса туна, çуйласа илнĕ суртлă вăрлăхсемпе (çелекенилĕ тата хресченсен выраннă лаăх суртсемпе) çеç акасси çине кусмала" тенине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе саксене туса иртермеле:

а) Районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсенче тата колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх участкисем çинче тĕштырăсене пуçха кĕртес ĕçе опытлăрах комбайнерсене хушса тĕплĕн пуçха кĕртессине организацилемелле. Çав участкăсем çинчи тырăсене тырăсем пĕтĕмпех пуçса çитнĕ вăхăтра кĕске суркура пуçха кĕртмеле.

б) Тырăсене пуçха кĕртнĕ чух, авăн çапнă чух, туртгарнă чух, тасатнă тата склада уранă чух вăрлăх участкисем тата районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсен участкисем çинчен илнĕ тырра урăх суртпа тата урăх категорилĕ тырăпа хутăштармала мар. Вăрлăхсене уçрама уйăрăм, лайăхрах складсем уйăрса хумала, вăрлăхлăх тырра тасатмасăр склада хывма чарас.

в) Вăрлăх участкисем çинчен илнĕ тырра вăрлăх валăçи йышăнсер пуçне урăх ĕçе йăмасăр.

Государствăна тыра тăратмали плана тултарса пынине пĕрлех колхозсемпе совхозсене вăрлăх участкисем çинчен илнĕ тырра вăрлăх фондне йышăнма пăрахас.

г) Суртлă мар вăрлăхсене пĕтĕмпех суртлă вăрлăхпа уйăлтарса хурас тĕлĕшпе, районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсен тата вăрлăх участкисенчен илнĕ вăрлăхсемсĕр пуçне, аппробациленĕ лаптăксем çинчен илнĕ тырăсемпе усă курмала тăвас.

Колхоза хăйне суртлă вăрлăхсене кирлĕ таран хатĕрлемĕ, çĕрĕç органĕсем пана план тăрăх колхозсем хушшинче улăштарма, Госсортфонд тата Заготзерно валăçи суртлă вăрлăх памали плана тултармалăх, совхоз директăрĕсемпе колхоз председателĕсене суртлă тырăсене уйăрмăн пухса кĕртсе уйăрмăн усрамала тума хушас.

15. Колхозниксене аванс шучĕпе тата колхоз хуçалăхĕнче кирлĕ пулсан пама 1938 çулăн тĕштырă, хĕвелçавращăн тата рис уйăрлетес.

II. Çĕрмамăкĕ тăрăх

18. Куçтиваци тĕлĕшпе тумали трактăрла ĕçсен планне пĕтĕмĕшпех тултарса çĕрмамăк анисене ĕç хутран кайа мар кирлĕ пек çемпе çеçĕ (куçтиваци, мотыгасемпе çемçетесси тата çумласси) тухмала. Ку ĕçсене Туркмен ССР тата Таджик ССР тăрăх августăн 1-мĕшĕнчен кайа ӳлмасăр, çĕрмамăк акса тăвакан ытти районсем тăрăх августăн 20-мĕшĕнчен кайа ӳлмасăр туса пĕтермеле.

19. Шăн усăсăр сухални пулмала мар, çав тĕлĕшпе çĕрмамăк стахановăнчĕçсен практикинче пысăк усă кăтартнă, мелпе—йăрăнăй-йăрăнăн шăварас мелпе усă курмала, çавăн хыççăн çĕрмамăк анине кашни шăвармассеренех вăхăтра çемçетсе капашкалатса тухмала (куçтиваци тумала, мотыгасемпе чавса çемçетмеле).

20. Çĕрмамăка сийĕн кӳрекен хурт-кăпшанкăсене кĕрешес ĕçе, уйăрăмăнах Азербайджан, Узбек тата Таджик ССР-сенче вăхăтра туса иртерес пулать, ку ĕçшĕн совхозсен тата МТС-сен директăрĕсемпе колхозсен председателĕсем çине ответлăх хурас.

21. Колхозсемпе совхозсенче çĕрмамăк пуçха пĕтермели срука декабĕрĕн 1-мĕшне çирĕплетес, ун хыççăн вара çийĕнчех çĕрмамăк тунисене пухма тата кĕрхи çĕртме тума тытăнмала тăвас.

22. Колхозниксен пухăвĕсенче çĕрмамăк пухмали диференцилле нормăсене туса çирĕплетмеле, çав нормăсене тунă чухне çĕрмамăк коробкисем мĕн таран уçăлнине шута илмеле.

23. Колхозсен правленийĕсене, пер кун хушшинче тултармали нормăна иртерес пухнă çĕрмамăкшăн колхозниксене 1,1—1,2 ĕçкуне хушса çырса пама сенес.

24. Вăрлăхлăх ельтă хлопăкçырепа тата пĕтĕм акмали вăрлăхсене михĕсенче усрамала тăвас. Перремеш репродукцин вăрлăхăнăх хлопăкăн отрепне михĕсенче йĕ лайăх витнĕ, ытти йăпаласемпе лайăх уйăрăм тăракан пулĕмсенчĕ усрамала.

25. Çĕрмамăкĕн ӳлашкисене (уçăлман коробăкчисене) механизацилĕ майпа пухса илес тĕлĕшпе пĕтĕм пур пек стелингсене йăсаса йĕркелесе хумала, ку ĕçе çентăбĕрĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтермеле.

26. Çĕрмамăк типĕтмели хатĕрсене çентăбĕрĕн 15-мĕш тĕлне йăсаса пĕтермеле.

III. Нăшман тăрăх

27. Сахăр кăшманĕн пĕтĕм лапăкĕ çинче кăшмансене икĕ хутран кайа мар апат памала, (минерал çăнăхсемпе тата вырăнти удобренисемпе), кăшман анисене виçĕ хутран кайа мар тарăнăй çемçетсе капăкалатмала, вăл шутран пĕр хутне кăшман речĕесене чĕрсе тухнă хыççăн тумала. Çакăнпа пĕр вăхăтрах кăшмана пĕрмайăх çумкурăкĕсенчен тасатса тăмала, тата ретсен хушшине çемçетсе ĕç кайа ӳлса пынине, уйăрăмăнах Харьков, Полтавă, Курск, Воронеж облăçĕсенче тата Алтай крайĕнче пĕтермеле.

28. Сахăр кăшманĕ ӳснĕ вăхăтра пĕрмайăх долгоносиксене, улăх лĕпĕшне, кĕрхи совкăна (кĕве) хирĕç, сахăр кăшманне сийĕнлекен ытти хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешес ĕçе вăхăтра та лайăх туса пымала; ку тĕлĕшпе кăшман анисене наркăмăлă ăпаласемпе вăхăтра сирнĕçе тухмала тата хурт-кăпшанкăсене алăпа тата механически майпа пĕтересшĕн организацилемеле, ку ĕçе тумасăн, çавăн пекех тата сахăр кăшманне сийĕнлекен хурт-кăпшанкăсене хирĕç çитес çул ăнăçлăн кĕрешессине пурнăçа кĕртме май çук.

29. Трактăр аггрегачĕсем сумне трактăрисемпе рулевойсем çирĕплетес, вĕсене сахăр кăшманне пуха пĕтеричченех çав аггрегатсем сумĕнче ĕçлемеле тумала.

30. Сахăр кăшманĕ акаканпа пур районсенче те сахăр кăшманне массăлăн пухма тытăнмаш çук çентăбĕрĕн 10-мĕшĕнчен кайа ӳлмала мар туса çирĕплетес, çапла вара çентăбĕр уйăхĕнче кăшман акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕсем çинчи кăшмачăн 25 процентне кăларса турттарса каймала пултăр.

Сахăр кăшманне кăларса тата турттарса, пĕтĕмпели ӳлашки сруксене çапла палăртса çирĕплетес:

Республикăсем, крайсем, облăçсем	Туса пĕтермели сруксем	
	Кăларса пĕтермели	Турттарса пĕтермели
Украина ССР (Чернигăв облăçĕçĕр пуçне)	Нойабĕрĕн 1-мĕш	Нойабĕрĕн 10-ш
Грузи тата Армйан ССР-сем, Краснодар крайĕ тата Ростов облăçĕ	Нойабĕрĕн 5-мĕш	Нойабĕрĕн 15-ш
Киргиз тата Казах ССР-сем	Нойабĕрĕн 5-мĕш	Нойабĕрĕн 25-ш
Алтай крайĕ тата Новосибирск облăçĕ	Октябĕрĕн 10-ш	Октябĕрĕн 25-ш
Смоленск, Орловск, Курск, Тамбов, Воронеж, Мускав, Тула, Рăзань, Саратăн, Куйбышев облăçĕсем, Ишсатри Хĕвелтухăç крайĕ, Башкир АССР, Украина ССР-ри Чернигăв облăçĕ	Октябĕрĕн 20-ш	Нойабĕрĕн 1-мĕш

31. Кăшман кăлармали машинăсемпе пĕтĕм кăшман акнă çĕр лаптăкĕн 90 процентне (унтан кайа мар) кăларкала тума организацилеме тата кăшман кăларакан звенăсем ĕçне кăшмансене чавса кăларнă кунах суйласа тасатса хумала тума организацилемелле. Çенташĕр уйăхĕнче кăшмана кăларнă куннех турттарса тухмала, ана хирте хăвармала мар, çакăнпа пĕрлех тата кăшмана суйласа илессине тата тасатассине шăпах контрактăпи договăрпа çинче кăтартнă пек тумала.

Кăшмана автомашинăсем çине бункĕрсенчен тиеме тумала. Çав шутпа кăшмана кăларма-тăнăччен малтан кăшман тиеме кӳрса çӳрекен тата стационарла бункĕрсене кирлĕ пек хатĕрлесе лартмала.

Кăшмана автомашинăсем çине бункĕрсенчен тиеме тумала. Çав шутпа кăшмана кăларма-тăнăччен малтан кăшман тиеме кӳрса çӳрекен тата стационарла бункĕрсене кирлĕ пек хатĕрлесе лартмала.

Кăшмана автомашинăсем çине кӳрекен тиеме тумала. Çав шутпа кăшмана кăларма-тăнăччен малтан кăшман тиеме кӳрса çӳрекен тата стационарла бункĕрсене кирлĕ пек хатĕрлесе лартмала.

Кăшмана автомашинăсем çине бункĕрсенчен тиеме тумала. Çав шутпа кăшмана кăларма-тăнăччен малтан кăшман тиеме кӳрса çӳрекен тата стационарла бункĕрсене кирлĕ пек хатĕрлесе лартмала.

IV. Йĕтĕн тата кантăр тăрăх

32. 1938 çулхи ийунĕн 10-мĕшне пĕрле тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕç пуçланиччен 15 кун малтан йĕтĕнне кантăра машинсемпе пуçтарса кĕртме уйăрăм участкăсем палăртса тухмала.

33. Механизăмсемпе усă курассине хирĕçле шухăшсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе пырса, тырпулсене пуçтарса кĕртмели тата йĕтĕн татмали машинсемпе туллин усă курмала.

34. Тылламали машинсене, йĕтĕн-кантăра шыва хутмали выраннисене, тинĕтмели хатĕрсене пĕтĕмпех тата йĕтĕн-кантăра малтанхи хут тирпейлессине вăхăтра тумали тăкăлă йĕркесене кашни уйăрăм колхоз тăрăх пăхса туха çирĕплетмеле.

35. Йĕтĕн-кантăра алăпа тата машинсемпе малтанхи хут тирпейлессине вăхăтра тумали тăкăлă йĕркесене кашни уйăрăм колхоз тăрăх пăхса туха çирĕплетмеле.

36. Совет тата уйăрăмăнах çĕрĕç органĕсене йĕтĕн-кантăра пуçтарса кĕртес ĕç пуçланиччен 10 кун малтан, вăрлăх ĕрчетекен колхозсемĕçĕр пуçне, кашни колхозра йĕтĕн тата кантăр вăрлăх участкисем палăртса хума хушас. Çав участкăсенчен пуçтарса илнĕ вăрлăхăчи малтан, татăй хыççăн 10—15 кунтан, контрактаци тăрăх пĕтĕмкантăр тăратас плана тултарнă хыççăн, çитес çул акма кирлĕ таран колхозсен вăрлăх фондне йышăнмала. Вăрлăх участкисенчен пухса илнĕ вăрлăхсене урăх ĕнепе мĕнле те пулин усă курас йĕркене пĕтермеле.

37. Сивĕттиччен кантăр çĕлне хутнă выраннисенчен кăлармала тумашкăн, кантăра пуçтарса кĕртнĕ хыççăнах шыва хутма тытăнмала.

38. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи апрелĕн 3 мĕшĕнче йышăннă постановленнийĕ çинче йĕтĕн ĕрчетекен звенăсене премилес тĕлĕшпе сĕнĕ условисене кантăр ĕрчетекен звенăсем çине те сарас.

V. Клевĕр, ӳцернă тата ытти нурăхсем тăрăх

39. Кашни колхозăрах государствăн кăтартнă план чухнех вăрлăхлăх курăксене вăхăтра пухса илмеле.

40. Клевĕр тата ӳцернĕ пухса илсе-типĕтнĕ хыççăнах çапассине клевĕр вăрлăхне шăкăлчесе тасатассине пĕр вăхăтрах туса, çав ĕçсене çулнă хыççăн 20 кунран кайа ăмасăр туса пĕтермеле.

41. Клевĕре торкăсемпе, МК-1100 молотилкăсемпе, клевĕр вăрлăхне шĕкĕлчемели тата ытти ăпаласемпе пурнине те туса кӳрмала.

42. МТС-сене, совхозсене тата колхозсене вăрлăхлăх курăксене пухса илес ĕçре кирлĕ пек майлаштарса комбайнсемпе усă курма сенес.

43. Кашни колхозпа совхозăн чи малтан контрактаци тăрăх памали клевĕр тата ӳцернĕ вăрлăхсене парса татса, декабĕрĕн 1-мĕшĕнче кайа ӳлмасăр—клевĕр, нойабĕрĕн 1-мĕшĕнче кайа ӳлмасăр—ӳцернă вăрлăхсесен фондне туса пĕтермеле.

VI. Табакпа махоркă тăрăх

44. Табак тата махорка плантацисенче вĕсем ӳснĕ вăхăтра, плантацисене ретле рет хушшисене сĕмçетмели машинасемпе пурнине те усă курса сахалтан та 4 хут сумкурăксене çумламала.

45. Табак çулçисене вĕсем пулса ситнĕ майĕпĕ йăпансем тăрăх тĕплĕн, табак çулçисене пăтратмаçăр—тата пухса илмеле. Табак çулçисене пулса ситмессĕр пĕтăлашший пултарса пухмала мар. Çулçăсем пĕр пек вăхăтра пулăймасăн çуйласа пухса йăлăх суртлă табак çулçи хатĕрлемеле.

46. Табак пухса ӳлмели сруксене çакăн пек тăвас:

а) Махорка тăрăх—Алтай, Краснойарск крайĕсемпе Новосибирск облăçĕсенчĕр пуçне (вĕсен çентăбĕрĕн 1-мĕшне пухса пĕтермеле) çентăбĕрĕн 10-мĕшне пухса пĕтермеле тăвас.

б) Сара табакăм тăрăх—октябĕрĕн 1-мĕшĕнчен кайа ӳлмасăр Украина ССР, Казах ССР, Киргиз ССР, Сталинград, Воронеж тата Орел облăçĕсем тăрăх—сентябĕрĕн 20-мĕшĕнчен кайа ӳлмасăр.

Пуçтарса илес ĕçе кайа хăварнипе табак тата махорка ирхи сивĕсемпе сийĕн кӳртмеле тумала мар.

47. 1938 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен кайа ӳлмасăр типĕтмели выраннисене ӳсмеç тата табаккисене типĕтмелине махорка типĕтмешкĕн çакса хумали выраннисен строгăлстăвне туса çитермеле. Колхозсенче типĕтмели выраннисене сигĕлĕклĕ пулмасан, ахаль типĕтмели выраннисене усă курас пулать.

48. Колхозсенче табак типĕтес йĕркене организацилесе тата типĕтмели хуçалăхăн пĕтĕм пултарулăхĕне усă курасси çинчен инструкцилесе иртермелес.

VII. Çĕрулми тата пахча-çимĕççем тăрăх

46. Çĕрулми, пăрахнă касăçем хушшине кăпăшкалатассине тата çумлассине 3—4 хутран кайа мар туса иртермеле, çĕрулми кăлармали машинсене ремонтлассине тата машинсемпе ĕçлеме водителсем хатĕрлес ĕçсене ийунĕ уйăхĕ хушшинче туса пĕтермеле; çавăнпа пĕрлех пахча-çимĕçпе çĕрулми-усрамали выраннисене çĕнерен тăвас, ремонтласа хатĕрлесе хурас ĕçсене августăн иккĕмĕшĕнчен кайа ӳлмасăр туса пĕтермеле.

50. Суртлă тата вăрлăхлăх пăрахнă участкăсенчи çĕрулмисене уйăрăм пуçтарса кĕртсе уйăрăм усрамала тăвас тĕлĕшпе тумали ĕçсене пĕтĕмпех туса хумала пултăр, суртлă çĕрулмине суртлă маррипе хутшăнтармала мар, тата вăрлăх валăçи усрамали çĕрулми çурчĕсене, категорийĕсемпе класĕсене пĕр-пĕрине хутшăнтармала мар.

51. Çĕрулмисене пуха кĕртнĕ хушăрах, 1939 çулта пăрахма кирлĕ чухлĕ çĕрулми вăрлăх фондне туса хумала, çавăнпа пĕрлех вăрлăхлăх кирлĕ çиçеховой фонд тумала. Суртлă вăрлăх çинелексер колхозсенчен суртлă мар çĕрулми илсе ытти колхозсенчи суртлă çĕрулмипе улăштарас ĕçе çĕр шăначчĕнех организацилесе туса иртермеле.

52. Районсенчи ĕçтăвкомсем çĕрулми кăларас тата ăна хатĕрлесе пынăччене, сыпăт, крахмалла патăк савăчĕсене лестерес ĕçсен планĕсене кашни колхозăн йăлосвет тăрăхăх çирĕплетсе хума хушас. Çĕрулми уйăрăм сурчĕсем хăçан пулса çитессине асра тытса, çĕрулми кăларма хăçан тухăçсине палăртса хумала, анчах кӳрук çентăбĕрĕн 20-мĕшĕнчен кайа мар пулмалă; çанталăк шăнтăчĕнчен кăларса пĕтермеле тата патшалăха обязательнăй йĕркепе памалине тата МТСтанщине ĕçленĕшĕн памалине леçсе пĕтермеле.

53. Çĕрулми кăларнă хыççăнах,—кăларнă чуне пулакан тăкакпа кĕрешес тĕлĕшпе çĕрулми кăларнă мĕн пур лаптăк çинче обязательнă йĕркепе çӳрелемеле, хыççăн тухакан çĕрулмисене пухса пымала.

54 Пахча-çимĕç кӳлтурисен кал-

(Пулашки 4-мĕш страницăра)

1938 çулти тырпула пухса кĕртесси çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленийĕ

(Йулашки)

тăнине шута илсе, çулсем, кĕпĕрнесем, автоколоннăсенче автомашинăсене йысас ĕçсене хăвăртрах тума кирлĕ ĕçсене туса иртермелле, МТС-семпе колхозсенчи туртăм вăйĕсемпе уçă курмали ĕçсене туса иртермелле.

58. Çĕрĕç органĕсемпе хатĕрлев организацийĕсене, МТС-тăнчийĕсемпе совхозсен директорĕсене тата колхоз председателĕсене тырпула хытă сыхласа тăмала, ăна вăрдассинчен тата пăсăлассинчен сыхласа, хатĕрден пуянкĕсемпе тараса хуçăситне йĕркене кĕртме хушать.

* * *

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ МТС-тăнчисен; колхозсемпе совхозсен çак çулта тырпул пухса кĕрес тата тырă парас ĕçсене кăтартулăн организацилеме пур условиксем те пур, тесе шутлать. Йăлăхусăлăхĕ машинăлă-техникăпа йĕрчен вăйăл хĕрнăшăллапли, пĕрремĕш класăл тракторсем, комбайнсен тата автомашинăсен вăйăл паркĕне пĕлĕс уçă курни ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерме, лайăх тырпула пĕтĕмлех, тăкăлаймасăр пухса кĕме май параç. Çакна тума чи малтанах ĕç вăйне тĕрĕс организацилемелле, халиччен туна ӳсĕмсемпе лăплантма лăхинче татăклăн кĕрешмелле, революцуллĕ сисĕмлĕхе путарса лартмала мар, халиччен çапса çĕмĕреймесĕр пытанса йăлна халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса татăклăн çĕмĕрсе пымала.

Пирĕн тухăçла тырпула анăçулăн пухса кĕртес задачă вăл колхоз стройĕн организацилĕхне çултерехрин татах тепĕр картлашка çине хăпартса тăратма, социализмăла ăмăртăна татах ӳстерес ăлама хуш. Советсен, чи малтанах çĕрĕç органĕсен йăлхусăлăхĕнчи стахановăлла йăхăмăн пуçĕнче тăрса йĕртсе пымала.

Массăсем хушшинче кулленех туса пымали организацилĕ ĕçсене уйрăм рекордсем хыççăн хăвалансипе уйăхтарма хăтланаканскенне хинĕрĕç татăклăн кĕрешмеле, малта пыракан комбайнерсен, çус-кантăр татакансен, пысăк тухăçлă тĕштырăпăн, хĕрле кашманăн, çĕр мăмăкĕшĕн тата ытти культурасемшĕн малта пырса кĕрешекенсен опычĕсене колхозниксемпе колхозницасен, совхозсенчи рабочисемпе работницăсен пĕтĕм массисене парса пымала пултăр.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене кăтартулăн организацилесси тата йăлхусăлăх продуктисене государствăна вăхăтра пĕтĕмпех парса татассишĕн тăрăшни МТС, колхозсемпе совхозсен руководителĕсен, йăлхусăлăх ĕçĕпе малта пыракансен, колхозниксемпе совхозсенчи пĕтĕм рабочисен чи малтанхи задачи пулса тăрать. Тырпулсене йăнăлăн пухса кĕртни тата ăна лайăх пăхса усрăни çĕршывăн йăлхусăлăх продуктисен йĕнчен тулли пурăнма, колхозсене организацилле хуçăлăх йĕнчен татах тĕреклентес вĕсен пуйăнлăхне ӳстерме, колхозниксен пурăнăçне татах пуйăнлатма май параç.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. Молотăв.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакаç
Н. Петруничев.

Мускав, Кремĕл.
1938 çулхи
июньĕн 23-мĕшĕ.

Выстăвкăра пулма выран панă колхозсен канашлăвĕ

ИШЛЕЙ. Кунта иртнĕ çулта пысăк тухăçла тырпул тунă. Пĕтĕм Сойузри йăлхусăлăх выставкинче тăма кандидата тăратна колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура Ишкери Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ К. Смирнов, Шупашкаркассинчи „Большевик" колхоз председателĕ Йелахан, Çĕвердлан ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Спиридонав тата ытти колхоз председательсемсем те Пĕтĕм Сойузри йăлхусăлăх выставкинче йĕпле хатĕрленсе пыни çинчен каласа пачĕç.

Пĕтĕм Сойузри йăлхусăлăх выставкине чылай колхозсем кăсал тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕллĕшпе пысăк ĕçсем тунине кĕтсе илеç-çе. Ишкери Сталин ячĕпе тăракан колхоз çурăкине лайăх иртрĕç. 269 гектар машинăпа акнă. Кĕрхи тырасене минерал çăнăхсемпе 38 гектар апат панă. Кунĕар-пуçне 18 гектар çуртри калчисене апат панă.

Бригадăсенче тырпулсене пухса кĕме ĕç планĕсем тунă. Кашни колхозник мĕнле ĕç тумалине пĕлсе тăрат.

Çĕвердлăн ячĕпе тăракан колхоз та тырпул тухăçлăхне хăпартас тесе тăрăшса ĕçлет. Ку колхоз пысăк мар пулни те, хĕллехи вăхăтра минерал çăнăхсĕм 17 тонна илсе килнĕ. Минерал çăнăхсемпе тырпулсене апат парас çĕрте ытларах уçă курна.

Анчах хăшпĕр колхозсем иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсемпех лăпланса лараççĕ. Акă, „Мотор", „Майăн 1-мĕшĕ", „Хĕрле тăнк" колхозсем Пĕтĕм Сойузри йăлхусăлăх выставкинче тивĕçлипе хатĕрленмеççĕ. „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз хĕлле кӳрсе килнĕ минерал çăнăхсемпе пурнине те усă курман.

Нумай колхозсем тата тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешсе ĕçе выльăх-черлĕх ĕрчетесе ĕçпе сыхăнтармаççĕ. „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз ĕне фермине организацилени 3 çул тултарать, анчах ку вăхăта ситсе те ферма валăйне вите çук.

Пĕтĕм Сойузри йăлхусăлăх выставкки усăлна тĕле пур ĕçпе те мала тухассишĕн тăрăшмала.

Гер. Щербаков.

КИТАЙРИ ВĂРÇА

ВАТАМ КИТАЙРА

Йапонĕçсем Тайху çине (Аньцинрен хĕвелăнăç ĕнненле) темиçе хутчен те атакăлана, анчах Китай çарĕсем вĕçĕн-йыр атакисене те сирсе пăрахнă. Йăнцăсы шывĕн çурçĕр тăтăкĕнче Йапони çарĕсен тĕп лаптăкĕ Цйаньшаньрен хĕвелтухăç ĕнче пĕр çĕрле чăмăртанса пăрахрĕç.

Йăнăлăн 24-мĕшĕнче Йапони çарĕсем Çанкоуран анатарахра (Дунйӳрен кăнтăр-хĕвелăнăç ĕнненле) 1000 çын десант антарнă.

Йăнăлăн 25 мĕшĕнче çĕнĕ подкрепленисем пырса çитнĕ хыççăн Китай çарĕсем Çанкоу районĕнче контраступлени тума пуçланă. Çав районта çапăçусем çаплах пыраççĕ ха.

КАНТĂР КИТАЙРА

Йапонĕçсем, Наньйао утравне (Сватоуран хĕвелтухăçнеле) йышăнна хыççăн, çав утрава тĕлметтĕл сыран хĕрринче десант антарнă хăтланнă. Анчах вĕсен ĕçĕсем аванссăр пулнă. Йапонĕçсем Наньйао утравĕ патĕнче пĕчĕкрех утравсене çеç йышăнма пултарнă.

Йăнăлăн 24-мĕшĕнче Йапони самолйочĕсем Сватоу çине икĕ хутчен вĕçсе пынă, вĕсем чукунçул станци çине бомбăсем пăрахнă.

Çав кунхинех Йапонин 33 самолйочĕ Кантон—Ханьков чукунçулĕн кăнтăр ĕнче бомбăсем пăрахнă. Вĕсем Лечан станци патĕнче (Шаочжоуран çурçĕреле) пысăк сийен тунă. Чукунçул сывăхĕнчи йăлсене пуранакан хресченсем хушшинче 50 çын ытла вилнĕ. Йапони самолйочĕсем бомбăсем Кантон—Коулун чукунçулĕ çине те пăрахнă.

(ТАСС).

Йу Йу-Жень сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем çинчен

ХАНЬКОУ, йăнăлăн 25-мĕшĕ (ТАСС). Гоминданăн вăтă членĕ, контрольле йăнăç (палата) председателĕ Йу Йу-Жень ТАСС корреспонденчĕне каланă ҫуха Сойузлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсен çитĕнĕвĕсенчен тĕлĕнни çинчен каласа панă.

„ССР Сойузĕнчи суйлавсем,—тесе калана вăл,—тĕнчери демократи историнче пысăк çитĕнӳсем пулса тăраççĕ. ССР Сойузĕнче массăсен чăн демократине етемĕн пĕтĕм йĕркĕлĕнĕ пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавăн пек суйлавсем çинчен урăх ниҫăн çĕршыв та пĕлмест. Суйлава пĕтĕм совет халăхĕ хутшăнни, паллах, совет çĕршывĕ Октябĕрти Аслă революцин пуплăранна политикăпа культурăпа тĕлĕшĕнчен тунă ӳсĕм результатĕсем пулса тăрат.

Совет Сойузĕнчи халăхсем суйлавсене пурте туслă пулса кĕтсе илеççĕ. Çакăнта ĕнтĕ епĕр сонет системин пĕтĕм çитĕнĕвне куратăпăр, çака вăл халăхсем ăйăпи правительствине çирĕппĕн кăмăлласа тăнине кăтартса парат. ССР Сойузĕнчи суйлавсем совет халăхĕн çитĕнĕвне кăтартăççĕ çеç мар, вĕсем тата тĕнчери хĕнхур ăйăне-çе пуранакан халăхсене те шанăк „параççĕ".

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Испанин оборонă министерстви йăнăлăн 25-мĕшĕнче пĕлтерпĕ тăрăх, республикă çарĕсем йăнăлăн 24-мĕшĕнче кăçхине 1.400 высотана тата Пуебла де Вальверде (Теруелтен кăнтăр-хĕвелтухăçнеле) патĕнче 1.373 высотана йышăннă. Аҫкор районĕнче (Кастельонтан çурçĕр хĕвелăнăçнеле) пăлхавçасем, авиаци, артиллерине танксем пулăшнипе, республикă çарĕсем çине вăйлăн атакăлана. Республикă çарĕсем Онда йăтлă йăлтан çурăх вырана туҫса кайнă. Çапăçусем çав йăлтан кăнтăр ĕнче пыраççĕ. Вильăямрос районĕнче (Кастельантан çурçĕр-хĕвелăнăç ĕнненле) республикă çарĕсем 063 тикĕн высотана тытса илнĕ, пăлхавçасене тытăкăна тата вĕсене вăрçă материалĕсене туртса илнĕ.

Вильăареаль районĕнче (Кастельонтан кăнтăр ĕнненле) республикă çарĕсем пăлхавçасем пур атакисене те сирсе пăрахна, вĕсем фашиссене пысăк çухатусем кӳнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем сук.

* * *

Йăнăлăн 25-мĕшĕнче, ирхине, фашиссен „Савойа" йышши линĕр самолйочĕ Валенси çывăхĕнчи йăлсен çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине сынсем вилнĕ. Ҫĕрамах фашиссен самолйочĕсем дел Граф (Валенси çывăхĕнче) порчĕ çине бомбăсем хыттăн пăрахнă, унта нумай çуртсене ишĕлтерсе антарнă. Республикăн занитлă батарейĕсем фашиссен самолйочĕсене кайăла хăвалаç-ланă.

Испань агентстви Аликантăран пĕлтерпĕ тăрăх, йăнăлăн 24-мĕшĕнче кăнтăрла 12 сехет те 15 минутра пăлхавçасен вищĕ моторлă 5 бомбардировщикĕ Аликанте ху ли çине бомбăсем чылай пăрахнă, пуре 70 çурт ишĕлтерсе антарнă. 12 çын вилнĕ тата 50 çын аманă.

(ТАСС).

Австрире çăнăх сутма чарнă

Фашисла Германи тытса илнĕ Австри территорийĕнче йăнăлăн 15-мĕшĕнчен пуçласа килте çăкăр пĕçерме тулă çăнăхĕпе ярăнăç сăпăнăхне хыççăн çав утрава тĕлметтĕл сыран хĕрринче десант антарнă хăтланнă. Анчах вĕсен ĕçĕсем аванссăр пулнă. Йапонĕçсем Наньйао утравĕ патĕнче пĕчĕкрех утравсене çеç йышăнма пултарнă.

Йăнăлăн 24-мĕшĕнче Йапони самолйочĕсем Сватоу çине икĕ хутчен вĕçсе пынă, вĕсем чукунçул станци çине бомбăсем пăрахнă.

Çав кунхинех Йапонин 33 самолйочĕ Кантон—Ханьков чукунçулĕн кăнтăр ĕнче бомбăсем пăрахнă. Вĕсем Лечан станци патĕнче (Шаочжоуран çурçĕреле) пысăк сийен тунă. Чукунçул сывăхĕнчи йăлсене пуранакан хресченсем хушшинче 50 çын ытла вилнĕ. Йапони самолйочĕсем бомбăсем Кантон—Коулун чукунçулĕ çине те пăрахнă.

(ТАСС).

ТЕАТР

Пысăк ӳсĕм

Йăнăлăн 23-мĕшĕнче Патăрьел районри колхоз театрĕ „Шупашкарта, академилĕ театрта малтанхи спектакльне хатĕрленĕ. П. Н. Осипăван „Айдар" пиессине Чăваш республикăнче лартман выран çук пулĕ, ăна пур çĕртре те темиçешер хут лартнă, Шупашкарта та сахал мар лартнă. Вăл пиессăна пурте тăван пĕлеççĕ. Пелме пĕлеççĕ те, анчах тĕрле анланаççĕ. Режиссор тата артисем хăйсем выльăкан ролĕсене йĕпле, мĕн тӳлĕ анланса, куракансене мĕнле, (ăнăнмелле-и йĕнĕмелле мар-и) кăтартса парасси пит пысăк ĕç. Мĕнле выльăççĕ-ха çак театрăн артисĕсем хăйсен ролĕсене?

Чаршав уçăлсанах „епĕр урамра, каска перенесем çинче хĕрсемне качăлсем çĕрĕ-памала выльăнине куратпăр. Астăвăр-ха авантарах, мĕн сисĕнет унта? Артиссем ман-чан çамрăксене, вĕсен вăйăн-куллисене авăн кăтартса параççĕ: вăйăра çамрăксем выльăнине, вĕсен савăнăçне ăнăнетĕн. Ку пĕчĕк детальпĕр, анчах вăл та пысăк выран пыйăнса тăрат. Артиссем выльăнăççĕ хуравçе, тес пулат.

Илепĕр Сентийер ролĕне (Н. Йефимав). Хăшĕ-пĕрисем Сентийер анпа пулмала мар, теме пултарĕç, уй пек калаписем пулкалаймасть, мĕншĕн тесен халиччен вăл образа никам та çапла кăтартман. Пĕр вăхăтра ăна чăваш театрĕнче Михайлав артисĕн йулашки пайĕ вальăн халĕ вулмасчĕ. Ун пек выльăни ытти вырăнсенче, ытти театрсенче те пулнă, анчах вăл ытларшăрех тăвараччĕ, савăнăçсем çеç кунта ăна асанна турĕ килчĕ. Н. Йефимав малтан Сентийере питĕ хăйсăр, çав тери йăваш çамрăк туса кăтартат. Кайăрахпа çеç, Айдар машкăлне тӳсне хыççăн, нушаланса, тертленсе выльăнăка хыççăн хăйĕн вăй-хăватне, хастарлăхне кирлĕ таран кăтартса парат. Йулашки пайăнче вăл: „Пинерпи Йун" çине йун! Айдар-и, епĕ-и! Иккемĕртен пĕри пĕтес пулать!,—тенĕ чухне, ăна паллама çук; вăл чăн-чăн хастарлă герой, вăл никама та парăнассăн туйăнмасть. Çапла вара пуçмăр машкăлне хирĕç тани ăна геройла кăларат. Çапла анланнă Сентийер ролĕне Н. Йефимав. Каласа хăварас пулать: хăш пĕр выранта уянăн çăмăлтарах, çамрăклăрах выльăни кирлĕ. Нихăш ĕçре те виçеренлĕхĕн кирлĕмест, çавна йăлтах ĕçлеме тухăн килĕшмест, çавна йăлтах асра тытас пулат. „Соблюдать чувство меры", тесçĕ ăна вырăссем.

Айдар ролĕнче те (В. Фролов) епĕр çĕнĕ елементсем пуррине сисетпĕр, характерла çĕнĕ шухăнсем пуррине туйатпăр. Кĕнĕ чухнех вăл саламатна хĕрес хурса сӳрет, вăл хăй талăк-пуне тӳрĕ тытса мар, сулкалаймаса, пуçне асла хурса, ыттисене çын выранне хумасăр, хăйне тем выранне хурса, йĕкĕлтенех пек туса сӳрет. Хресченсем, пуринчен ытла хăйĕн тарçисем уншăн çын мар, вăл вĕсене выльăх выранне хурат, çавăнпа вăл ним шиклентмесĕр Аҫтупай пинĕ çине сурат те, савăнма вăл сасăсăр, мăшкăласа кулат те, çавăнпа вăл пĕр ывăç кĕмĕл уксa ĕлпай хыççăн çамрăксем çине пăхасшăн та мар, мĕншĕн тесен вăл (куратăр-и?) пуринчен те пуйăн, пуринчен те вăйлă, шалçи тулнччен, хресченсем унăн мăшкăлне тӳсеймесĕр ăна хирĕç тăнниччен вăл никамран та хăрамасть. Çапла анланнă В. Фролов Айдар ролĕне, çавăн пек катартса пачĕ вăл пире. Сенĕлле, пирĕн шутпа, терĕсрех.

К. Стахейева та Пинерпи ролĕне килĕшӳлĕ выльаса пачĕ: унăн сасси уçă, хĕрĕерри йӳррисене чĕре патне пымала, пысăк-камалла йӳрласа пачĕ. Çакăн пек каҫан парас килет ăна: йулашки пăйĕсенче— Айдарпа тавлашнă чухне унăн хăйĕн çиллине, ăна чĕререн куравманнине уçсăртарах катартса памала.

Аҫтупай ролĕне Т. Соловйов выльат. Вăл питĕ пысăк ситĕнӳ тунă, ăна халĕ, иртнĕ вăхăтрипе танлаштарсан, палламала та мар. Аҫта ертиса тухна вăл. Астăвăр-ха, цйесĕан тăвăтăмĕш пайне выльăнă чухне Сентийере Аҫтупайран хăтарас тесе Улай çĕçĕне çеклесе хыҫă кăшкăрса ларат; „Кам хăйăр Сентийере тивмĕ!" Аҫтупай чăркусланса ларнă, вăл çав тери хăранă. Астăвăр-и, çав вăхăтра Соловйов мĕнле кăтартса парат Аҫтупай обранне; вăл хăраннине кусĕсене çарса пăрахнă, çăварне карнă, пăхма хăрамала ун çине. Соловйов вăл вăхăтра сцена çинче мар, чăн-чăн пурнăçра пек. Йе тата вăл хăнисене йĕпле йышăннине, аранше йĕпле кашкăрнине, Айдар уй çине çурсан, вăл йĕпле шала сыртса тăнине т. ыт. те еçа илĕр те, Соловйов халĕ мĕнле пултарулă артист иккенне хăвăрах аван сисĕр. Пĕр ситменлĕх туйăнче унăн ролĕнче, Пинерпийе Сентийерпе сӳренĕмĕн вырçна-хĕненĕ чухне унăн çилелĕрех, хăйăртарах пулмала. Хай хĕрне йуратмасть-мар вăл, йуратат те, хĕрхенет те, анчах вăл авăрт астутарна тăрах: „улпутсене йураса пуйăнтаран пурнăç шыракан кил-йыш пусĕ" иккенне манас пулмасть, çавăншăн вăл тăван хĕрне те шеламест. Тепĕр вырăн тата: тăвăтăмĕш пайĕн вĕçĕнче Сентийерпе Улай ăна ӳкетлесе хыççăн.

Ахтупай ҫеçăн, хытă сасăпа: „Тăвансем! Ан хăварăрах мана, стараке. Хĕре Айдар аллинчен хăтарма пулăшăрах!"—тени курăракансем патне çитет.

Питĕ аван выльăт мăн-кĕрӳ ролĕне С. Смирнов: туйра вăл пуçлăх, пуçа çулеле ыватнă, хырăма кашăртнă, вăл унта „герой", ăна вăл пур çĕрте тĕрлĕ майпа кăтартассăн: паскамасăр, мăнкăмăлăн калăсат, вăхăтран-вăхăта урăхамах пек ташласа илет, качака сухалне сăтăркалать, унăн пичĕ, куçĕ, сăмси-çăварĕ—пурте, вăл пуринчен ăсла иккенне кăтартасшăн. Вăл вĕт, Айдарăн сывăх сынни. Çавăн пек образ пачĕ С. Смирнов.

А. Митукова ролĕ пысăк мар, вăл Сентийер амăшĕн роли вырăнăт, çав пĕчĕк ролĕте те вăл хăйĕн талантне аван палăртрĕ. Елекрех епĕр Сентийер амăшĕ вĕçĕмрен йĕрнине астăвăттăмăр, Митукова ăна тĕнмĕнрен, хĕрт-сурткăн хăракан çĕрăрăм туса кăтартрĕ. Астăвăтăр-и, йĕпле вăл килĕнчен хĕртсурт хăваласа кăларат, пӳртре йĕпле çăварăнкалат. Елĕкки чăваш арăмĕ: утни, калаçни, çăвăн. Вăл ытлашши йĕрсе йĕр янтăмест.

М. Кубенĕв пысăк шанчăк парат, артиспа талант пур унăн. Улай ролĕне калама çук аван выльаса пачĕ, выльаса пачĕ мар, сцена çинче вăл пуранат. Тулта цавлапи илтĕнне вăхăтра (тăвăттăмĕн пайĕ) Сентийер патне Улай питĕ хăварт чупса кĕрет. Вăл хытă чупса килнине, йĕпле пăлханнине Кубенĕв ĕненмеле катартса парат. Вăл хăйне тытма пĕлет.

Пурин çинчен те кирлĕ таран сырма выран сахал, анчах сакна каласа хăварас пулат: пурте пекех хăйсен ролĕсене тĕрĕс анланнă, аван катартăннă, килешӳлĕ выльаççĕ.

В. Фролов режиссорăн усăлла та выранла приймесĕм çинчен калас пулат: килешӳлĕ йăпаласан нумай шухăшласа кăларнă вăл

Акторсен коллективĕ анăçла, малашне тата пысăкрах пулашу парас пулат, районти колхоз театрĕсен çăкăн пек гастролесене час-час туса иртерес пулат, вăл пысăк усă парат, пĕр-пĕрин çинченĕвĕсемпе усă курма пулăшат.

Иртнĕ çулсенче, Чăвашсен Государствăн Академи Театрĕнче халăх тăшманĕ—урнă кушак Макçи-мав—Кощкинский „хуçа" пулса пуçтăннă вăхăтра, районти колхоз театрĕсем Шупашкара килсе Академилĕ театрта спектакльсен лартасси çинчен шухăшлама та пултарайман. Вăл, хăй çав тери, талантсăр, хура йăнăл, усал пушăшлă пулнă пирки, хăйĕнчен талантлă, хастарла кадрсем ӳссе-синчен питĕ хăранă, театра тепĕрпех пĕтерсе лартма шут, тытăнă. Халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкни—пирĕн театрсенче талантлă, пысăк хастарла кадрсем ӳсме çул уçни пулса тăчĕ.

Сергей Йалавин.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Заготзерно Чăваш республикăнчи конторине
контурта тата районсенче ĕçлеме
Инженер-строителсем, техник-строителсем, аслă бухгалтĕрсем (руководителсем), аслă экономист, счетовод, кассир-инкассатăр
КИРЛĔ
Адрес: г. Чебоксары, ул. Калинина, 83, Республиканская контора Заготзерно.

ПАЙАН ĕçпе, ШУПАШКАРТИ документлă, КИНО-ТЕАТРТИ сасăлă фильм
Город Ленина
Çĕвиссем—6 сех., 30 мин. 8 сех. 30 мин. тата 10 с.30 мин. пусланаççĕ.
Касса кăтартăра 2 сех. 30 минутран уçă.
Коллективлăн курма çайăвăкĕсем йышăнаççĕ.

Республикăлă Испанире

43-мĕш дивизин паттăрлăхĕ

Кунта епĕр Пиреней çăрçисем çинче, интервентсен тытăнче çапăçна республикăлă çарăн 43-мĕш дивизи çинчен Эстелла çырна корреспондендине пичетлесе кăларатăпăр. Ку корреспонденцине Париҫре тухса тăракан фашиссăма хирĕçле Итăлин „Воче дельц Итальяни" хаçатра нумай пулмасть пичетлесе кăларнă. Халĕ 43-мĕш дивизи республикăлă Испанин территорине лайăх çитнĕ.

Испанин республикăлă çарĕн паттăр çапăçăвĕсем хушшинче интервентсен тытăнчи 43-мĕш дивизин керешĕвĕ ун йăр ӳçĕн курăнса тăракканнисенчен пĕри пулса тăрат. Испани халăхĕ çав дивизин паттăр бойецĕсеме, командирĕсеме мухтанат. Çав дивизин ĕçĕ халăх тата çар хушшинче фашиссемпе интервентсене çĕнтерес шанăка çирĕплетет.

Çулĕ Пиреней çăрçисем Испанийĕ Францири уйăраса тăраççĕ. Çав çăрт туписем çинче йăр выртат. Фашиссем Каталонине Франципе сыхăнмала мар тăвас задача лартнă. Вĕсем республикăлă çарне çурçĕр ĕнчен çăнăраса илме шутласа хунă. Çав ĕçе тытăнчĕç вĕсем, анчах 43-мĕш дивизи çине пырса тăранчĕç.

Ташман нихăçанхинчен те ытларах вăйла тапăнсан, республикăлă çарĕ хăйĕн линине турлетнĕ чухне, 43-мĕш дивизи чи лайăхрах позици йышăнас тесе хĕвелтухăçнеле чакнă. Çак дивизи чакасса питĕ йĕркеленĕ чакнă. Дивизи выранти халăха пурне тенĕ пекех илсе тухнă, вĕсене фашисăмăн йунăла пусмăрĕнчен çăлса хăварнă. Выльăхçи çине çĕнĕрен тапăнма хăтланчĕç, анчах кăç пулнă теле вĕсем кайăла чакрĕç, çапăçу пулнă вырăнта вĕсен 3.000 вилĕ выртса йулчĕ.

Пирĕн дивизине çапăçна вăрçăра фашиссем çак çĕктăрта пынă пĕтĕм вăрçă вăхăтĕнчинех ытларах çын çухатнă, тесе калаçă йулашкинчен Массимо Грасиа, Франко генерал хăйне çак çапăçусенче вĕсен 15.000 çын пĕтнине пăшăннине каласан та çителĕксĕ. Ку сахал-ха. Вăл Пиреней çăрçисене туртса илме хăтлансан тата ытларах пĕтĕ.

Франко ирĕксĕр йышăннине Италин фашисла хаçачĕ „Ресто дель Карлино" çирĕплетет. Нумай пулмасть вăл çапла çырнă:

„Çăрт çине çирĕпленсе выраçнă 43-мĕш дивизи тĕлĕнмеле вăйлă хирĕç тăрат. Пĕтĕм лупам выранă çăр лагерĕ туса хунă. Малтанхи линире салтаксем çапăçаççĕ, вĕсем хыçĕнче хресченсем тăраççĕ, хресченсем кунĕн-çĕрĕн укрепленисем, пулемет йăвисем тавас ĕçре ĕçлеççĕ. Пур çĕрте те тупă, пулемет выраçесем. Пĕтĕм лаптăк Китай стени йĕнĕрле крепăç пулса тăнă".

Дивизире çирĕп дисциплинă, туслă йулташлăх. Бойецсем сураланнă йулташĕсене çăрт çинчи сукмаксем тăрăх, хăйсен пурнăçне хĕрхенмеçĕр 90-шер километр хăйсем çĕклесе пынисем пулнă. Дивизи инженерĕн тылра хăйĕн меднинă пункчĕсене тунă, сураланнисене çав инçе выранă çĕклесе пынă.

Хĕрарăмсемпе ачасене — 6.000 çынна—фашиссем йышăнса илекен выранта илсе тухас ĕçре паттăрлăх кăтартнă.

Çав паттăр дивизи хурçă пек çирĕп çынсенчен, хăйăр çапăçусенче пиçнĕ çынсенчен тăрат. Бойецсенчен нумайăшĕ—Çурçĕр Испанири çăрт-туçем çинче пурăнна çынсем: арагонецсем, басксем, каталонецсем. Дивизи командирĕ Антонио Бельтран—революцилĕ çапăçусен ветеранĕ. 1930 çулта вăл Галанпа тата Гариса Ернандецпа пĕрле фашисăма хирĕçле Хакари восстанийĕ йĕртсе пыракансенчен пĕри пулнă. Вăл унччене вилĕмрен йăмăхри пек çăлăннă.

Дивизин политикăлă комиссарĕ Массимо Грасиа та революцилĕ керешӳсен шкулĕ витĕр тухнă. Хай çамрăк пулсан та, унăн çĕçĕлем йăлтах кăвакарчăн. Фашисла паллах пулăшнăн вăхăтра вăл Сарагосăри социалисла парти организацин секретарĕ пулнă. Фашиссем çав хулăна туртса илсен, Грасиа 15 уйăх хушши вăрттăн шăтăкра пурăннă, йулташĕсем ун патне апат-çимĕç вăрттăн илсе пырса панă. Вăл йулашкинчен басксем çĕршывне тарнă.

* * *

Паттăр 43-мĕш дивизин ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче сăнаса тăчĕ. Пур çĕртен те çав дивизи йăчĕпе, Пиреней çăрçисенчи вырансене саламсем, ыра сунписем пырса тăчĕç.

„Епĕр сирĕнпе пĕрле, Испани халăхĕн паттăр ĕçĕсене куреа тĕлĕнетпĕр", тесе каласçĕ Лондăнри радио йуратакансем радио тăрăх. Англин тепĕр радиостанцийĕ бойецсене чĕнсе: „Пиренейри мухтавлă бойецсем, тăнмансене хирĕç тăрăр", тесе саламлана. Азирен те: „Епăр сирĕнпе пĕрле" тенĕ салам килнĕ.

* * *

Нумай пулмасть çак дивизи Франци урлă республикăлă Испанине килнĕ. Францире дивизи бойецсенчен: ĕçĕр аҫта кайма килĕшеттĕр, тесе ыйтсан:

— Пире хăвăртрах республикăлă Испани çарне йăрăр, епĕр интервентсене хирĕç çапăçма кайатпăр,— тесе ответленĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 316

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.

3—2